28-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1945 июнь 22 эрнекун 119 (6870) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) Обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн, ЧАССР Верховный Совечĕн тата Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

ХИСЕП ХĂМИ

Ĕçсынни депутачĕсен районсовечĕсен исполкомĕсемпе ВКП(б) райкомĕсем тăратнă тăрăх, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государство планне ăнăçлă тултарнăшăн тата выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне ӳстернĕшĕн малта пыракан çак колхозсемпе колхозниксене республикăри ХИСЕП ХĂМИ çине кĕртнĕ:

ВĂРНАР РАЙОНĔ ТĂРĂХ:

45. **Киров ячĕпе тăракан колхоз** (председателĕ **В. К. Кузьмин** юлташ, ферма заведующийĕ **А. П. Павлов** юлташ, лаша фермин заведующийĕ **Н. К. Лукушкин** юлташ) выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана лашасем енĕпе 104 процент, мăйракаллă шултăра выльăх енĕпе 108 процент, сыснасем енĕпе 153 процент, сурăхсем енĕпе 157 процент тултарнă. Çамрăк выльăхсене пурне те сыхласа хăварнă. Государствăна çур çулшăн аш-какай парса татнă.

Ку колхозри конюх **П. Д. Данилов** юлташ хăй пăхакан 8 кĕсререн 7 тиха илнĕ. Кăçал кĕсресене пурне те ăратлă ăйăрпа чуптарса хăварнă.

46. **Ленин ячĕпе тăракан колхозри** конюх **И. В. Абросимов** юлташ 10 кĕсререн 8 тиха илнĕ. Кăçал кĕсресене пурне те ăратлă ăйăрпа чуптарса хăварнă.

Çав колхозрах пăру пăхакан **А. Я. Катанаева** юлташ, 1944 çулта 30 ĕнерен 30 пăру илсе çитĕнтернĕскер, кăçал та 25 ĕнерен 25 пăру илсе çитĕнтерет.

47. **«Гигант» колхозри** старши конюх **С. В. Лапташкин** 22 кĕсререн 20 тиха илнĕ. Кăçал кĕсресене пурне те ăратлă ăйăрпа чуптарса хăварнă.

ТĂВАЙ РАЙОНĔ ТĂРĂХ:

48. **Мичурин ячĕпе тăракан колхоз** (председателĕ **Г. И. Иванов** юлташ, ферма заведующийĕ **И. С. Мальчиков** юлташ) выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана лашасем енĕпе 107 процент, мăйракаллă шултăра выльăх енĕпе 130 процент, сыснасем енĕпе 225 процент, сурăхсем енĕпе 164 процент, кайăк-кĕшĕк енĕпе 102 процент тултарнă. Государствăна çулталăкшăн аш-какай 66 процент, çăмарта 88 процент, çăм 104 процент панă.

Чăваш АССР Совнаркомĕнче

АПАТ-ÇИМĔÇ КОМБИНАЧĔСЕН, ПУРĂНМАЛЛИ ÇУРТЙĔР ХУÇАЛĂХ ПРЕДПРИЯТИЙĔСЕН, ПРОМЫСЛА КООПЕРАЦИ АРТЕЛĔСЕН ТАТА ЙĔНВАЛИДСЕН КООПЕРАЦИ АРТЕЛĔСЕН СОЦИАЛИЗМЛА ĂМĂРТĂВĔН МАЙ УЙĂХĔНЧИ ИТОГĔСЕМ ÇИНЧЕН

Чăваш АССР Совнаркомĕ, республикăри апат-çимĕç комбиначĕсен, пурăнмалли çуртйĕр хуçалăх предприятийĕсен, промысла кооперации артелĕсен тата инвалидсен кооперации артелĕсен социализмла ăмăртăвĕн 1945 çулхи май уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухса, çаксем мала тухнине палăртнă:

АПАТ-ÇИМĔÇ КОМБИНАЧĔСЕМ ЕНĔПЕ:

Канаш хулинчи апат-çимĕç комбиначĕ (директорĕ Захватова юлташ, хула Совет исполкомĕн председателĕ Кизилов юлташ) продукци туса кăлармалли плана 203,1 процент тултарнă. Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне çак комбинат аллинче хăварма тата ăна 8 пин тенкĕ преми пама йышăннă.

Май уйăхĕнче Улатăр районĕнчи тата Улатăр хулинчи апат-çимĕç комбиначĕсем лайăх ĕçленине палăртнă.

ПУРĂНМАЛЛИ ÇУРТЙĔР ХУÇАЛĂХ ПРЕДПРИЯТИЙĔСЕМ ЕНĔПЕ:

Шупашкарти гостиницăна (директорĕ Додонова юлташ) Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне Канашри колхозник çуртĕнчен илсе пама тата 5 пин тенкĕ преми пама йышăннă.

Канашри Колхозник çуртне (заведующийĕ Петров юлташ) пĕррремĕш преми — 3 пин тенкĕ пама йышăннă.

Тасамарлăхсене тасатакан Канашри обоза (заведующийĕ Скворцов юлташ) иккĕмĕш преми—2 пин тенкĕ пама йышăннă.

Май уйăхĕнче Улатăр (хула Совет исполкомĕн председателĕ Вислобоков юлташ) тата Çĕмĕрле (райсовет исполкомĕн председателĕ Подклетнов юлташ) хулисенчи мунчасем начар ĕçленине палăртнă.

ИНВАЛИДСЕН КООПЕРАЦИ АРТЕЛĔСЕМ ЕНĔПЕ:

Йĕпреçри «Помощь» артель (правлени председателĕ **Ларин** юлташ, райсовет исполкомĕн председателĕ Соколов юлташ) продукци туса кăлармалли плана 258,4 процент, ĕçсыннисем валли куллен кирлĕ таварсем туса кăлармалли плана 382,7 процент тултарнă. Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне çак артель аллинчех хăварма тата 13 пин тенкĕ преми пама йышăннă.

Канашри «Красный воин» артель (правлени председателĕ Корчагин юлташ, хула Совет исполкомĕн председателĕ Кизилов юлташ) продукци туса кăлармалли плана 105 процент, ĕçсыннисем валли куллен кирлĕ таварсем туса кăлармалли плана 105,5 процент тултарнă. «Красный воин» артеле пĕррремĕш преми—10 пин тенкĕ пама йышăннă.

Май уйăхĕнче Пăрачкав районĕнчи «Новый путь», Çĕмĕрле районĕнчи «Партизан» тата Чăканарти «Красный стрелок» артельсем лайăххăн ĕçленине палăртнă.

ПРОМЫСЛА КООПЕРАЦИ АРТЕЛĔСЕМ ЕНĔПЕ:

Шупашкарти «Пекарь» артель (председателĕ Петров юлташ, хула Совет исполкомĕн председателĕ Аникин юлташ) продукци туса кăлармалли плана 204,2 процент тултарнă. Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне çак артель аллинчех хăварма тата 8 пин тенкĕ преми пама йышăннă.

Карачьялĕнчи «Труд» артель (председателĕ Мокеев юлташ, райсовет исполкомĕн председателĕн ĕçĕсене тăваканĕ Леонтьев юлташ) продукци туса кăлармалли плана 121,5 процент тултарнă. Ăна 5 пин тенкĕ преми пама йышăннă.

Канашри «Авангард» артель (председателĕ Васильев юлташ) продукци туса кăлармалли плана 117,6 процент тултарнă. Ăна 5 пин тенкĕ преми пама йышăннă.

Çĕмĕрле комбиначĕ хăйĕн обязательствине чыслăн пурнăçларĕ

ÇĔМĔРЛЕ, июнĕн 21-мĕшĕ. (Телеграфпа). Комбинат коллективĕ Чăваш республики 25 çул тултарнă ятпа социализмлă ăмăрту пуçарса илнĕ обязательствăсене пурнăçларĕ. Продукци туса кăлармалли çур çулти программăна июнĕн 15-мĕшĕ тĕлне 105 процент тултарчĕ. Тракторсем валли запаслă пайсем туса кăлармалли çур çулти плана та пĕтĕмпех пурнăçа кĕртрĕ.

Комбинат директорĕ **ШАРОЙКО**,
Главнăй инженер **СЛУЦКИЙ**,
Парторганизацин секретарĕ **ПОТАНИН**,
Завком председателĕ **ИЛЛАРИОНОВ**.

Çĕмĕрле, Комбинат

Шаройко, Слуцкий, Потанин, Илларионов юлташсене

Чăваш республики 25 çул тултарнă май социализмлă ăмăртура илнĕ обязательствăсене пурнăçласа, çур çулти программăна тата тракторсем валли запаслă пайсем туса кăлармалли иккĕмĕш кварталти плана срокчен тултарнă ятпа Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕ комбинат коллективне саламлаççĕ тата комбинат коллективĕ социализмлă ăмăрту ялавне тата çӳлерех çĕклесе çулталăкри плана срокчен тултарасса шанса тăраççĕ.

Чăваш АССР Совнаркомĕн Председателĕ **А. МАТВЕЕВ**. ВКП(б) Обкомĕн секретарĕ **Т. АХАЗОВ**.

ПЛАНА ЫТЛАШШИПЕХ ТУЛТАРЧĔÇ

ВĂРНАР, июнĕн 20-мĕшĕ. (Телефонпа). Вăрман хуçалăхĕнче ĕçлекенсен коллективĕ Шăхасан районĕнчен вутă хатĕрлевĕпе Шăхасан районĕнчи колхозниксем. Чăваш республики 25 çул тултарнă ятпа пыракан ăмăртăва хутшăнса, чугун çул транспорчĕ валли иккĕмĕш кварталта вутă хатĕрлесе турттармалли плана июнĕн 20-мĕшĕ тĕлне тултарма сăмах панăччĕ. Халĕ вĕсем хăйсен сăмахне пурнăçа кĕртрĕç: чугун çул валли пĕтĕмпе 3.300 кубометр вутă касса хатĕрленĕ, 2.900 кубометр турттарса кăларнă. Вăрман хуçалăхĕнче ĕçлекенсен коллективĕ Чăваш автономи уявне çĕнĕ çитĕнӳсемпе кĕтсе илме хатĕрленет.

Е. ВОЛКОВ.

Польшăра, Литвара тата Белоруссипе Украинăн хĕвеланăç районĕсенче Хĕрлĕ Çар тылĕнче поляксен вăрттăн ĕçленĕ организацийĕн организаторĕсемпе руководителĕсене тата участникĕсене суд туни

Айăпласа çырни

(Малалли. Пуçламăшĕ „Чăваш Коммунин" 118-мĕш номерĕнче)

IV.

«КРАЙОВĂЙ ÇАРĂН» ТАТА ПОЛЯКСЕН ВĂРТТĂН «ПРАВИТЕЛЬСТВИН» ХĔРЛĔ ÇАР ТЫЛĔНЧИ ВĂРТТĂН РАДИОСТАНЦИЙĔСЕН ĔÇĔСЕМ

Советăн çар командованийĕ радио йышăнакан тата радио паракан аппаратурăна Хĕрлĕ Çар командованийĕн аллине пама хушнă приказа пăхăнмасăр, «Крайовăй çарăн» округсенчи тата вырăнти вăрттăн ĕçлекен организацийĕсем радио аппаратсене хăйсен аллинчех хăварнă. Çав радиостанцисемпе вĕсем поляксен эмиграцири «правительствине» тата «АК» верховнăй командованине хăйсем илнĕ приказсене мĕнле пурнăçа кĕртсе пыни çинчен, Хĕрлĕ Çар çинчен пухнă шпионла сведенисене, Хĕрлĕ Çар нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă Польша территорийĕ çинче Хĕрлĕ Çар тăвакан ĕçсем çинчен тĕрлĕрен элексем тата провокациллĕ хыпарсем сарас тĕлĕшпе усă курнă.

Поляксен вăрттăн «правительстви» радиопередатчиксемпе поляксен эмиграцири «правительствине» Польшăри политика тĕлĕшĕнчи лару-тăру çинчен яланхи пекех суя та элеклĕ хыпарсем пĕлтерсе тăрас тĕлĕшпе усă курнă. Айăпланакансем **Окулицкий, Янковский, Бень, Пайдак, Ясюкович, Пужак, Звежинский, Чарновский, Багинский, Хацинский, Урбанский** тата **Михаловский** следствире çаксене çирĕплетсе пачĕç.

1944 çулхи август уйăхĕпе 1945 çулхи май уйăхĕ хушшинче Совет Союзĕн çар влаçĕсем пĕтĕмпе 25 вăрттăн радиопередатчик тупнă. Вĕсенчен: Польшăра —15 (Варшава, Краков, Люблин, Кельцы, Петруков, Седлец, Белосток, Хельм, Жешув, Тарнув, Минко-Мазовецк тата Бялоподляск хулисенче); Украинăпа Белоруссин хĕвеланăçĕнчи облаçĕсенче тата Литвара—10 (Львов, Лида, Вильнюс хулисенче тата ытти хуласенче те) тупнă. Çав радиостанцисене тупнă чухне радистсене, техниксене тата вăрттăн радиостанцисене тытса усракансене—И. А. **Свитайские, С. В. Куявинские, В. И. Ошмянские** тата **А. Л. Гролинскаяна** арестленĕ.

Çав çӳлерех асăннă çынсене пурне те арестлесе ответ тыттарнă. Вĕсем Хĕрлĕ Çар тылĕнче радиостанцисем организацилесе вĕсемпе усă курни çинчен тĕплĕн каласа панă.

(ĕç листисем — 9-23, 66-104, 218—231; 17-мĕш том).

Аялтарахра çав вăрттăн ĕçленĕ хăшпĕр радиостанцисем çинчен тĕплĕнрех кăтартса паратпăр:

1. 1944 çулхи сентябрĕн 8-мĕшĕнче Залески хуторта (Лида хулинчен 18 километр çурçĕр-хĕвеланăç еннерехре) «Крайовăй çарăн» 20-мĕш номерлĕ вăрттăн радиостанцине тупнă. Çав радиостанцие пĕтерсе тăкнă чухне çаксене тытса илнĕ: радио йышăнакан тата саракан пĕчĕк радиостанци, радиоприемникпа унăн уйрăм пайĕсене, панă тата йышăннă шифрланă радиограммăсен текстне çырса хунă икĕ тетрадь, радиотелеграф ĕçĕнче усă курнă кодсем.

2. 1944 çулхи октябрĕн 15-мĕшĕнче Жешув хулинче (Польшăра) «Крайовăй çарăн» 41-мĕш номерлĕ вăрттăн радиостанцине тупнă. Çав радиостанци поляксен Лондонри эмиграцири правительствипе сыхăну тытса тăнă.

Çавăн пекех унта тата икĕ журнал тупнă, çав журналсем çине радио сыхăнăвĕ çинчен (чĕнмелли сигналсем, хум вăрăмăшĕсем, мĕнле илтĕнни çинчен), кашни кун миçе радиограмма йышăннине тата панине çырса хунă.

3. 1944 çулхи февралĕн 19-мĕшĕнче Пясечно хулинче (Варшава районĕнче) «Крайовăй çарăн» 55-мĕш номерлĕ вăрттăн радиостанцине тупнă. Ку радиостанци те поляксен эмиграцири «правительствипе» сыхăну тытса тăнă.

4. 1945 çулхи мартăн 9-мĕшĕнче Петркув хулинче (Польшăра) «Крайовăй çарăн» 54-мĕш номерлĕ вăрттăн радиостанцине тупнă. Ку радиостанци те поляксен эмиграцири «правительствипе» сыхăну тытса тăнă. Кунта радио йышăнакан тата паракан пĕчĕк икĕ радиостанци, шифрланă радиограммăсене çырса хумалли икĕ журнал тата радио тăрăх каласмалли код тупнă.

1945 çулхи апрель уйăхĕнче Львов хулинче арестленĕ «Крайовăй çарăн» Львов обшаринчи командующийĕ Феликс Александрович **Янсон**, (вăрттăн ячĕ «**Кармен**») вăрттăн радиосыхăнупа хăй мĕнле усă курни çинчен çапла каласа панă:

«Хĕрлĕ Çар Львов хулине пынă вăхăтран тытăнса, хама арестленĕ вăхăтченех Львов обшарин (округĕн) е Жешув подокругĕн радиостанцийĕ тăрăх «АК»-ăн главнăй командованине кашни кунах пĕрер радиограмма парса тăтăм».

(ĕç листи—50; 20-мĕш том)

Львов обшарин командующийĕ пулнă май, **Янсон** «Крайовăй çарăн» командующийĕпе **Л. Б. Окулицкипе** радио тăрăх сыхăну тытса тăнă.

(ĕç листисем—49-50; 20-мĕш том).

V.

ГЕРМАНИПЕ ПĔРЛЕ ПУЛСА ССР СОЮЗНЕ ХИРĔÇ ВĂРÇМА ХАТĔРЛЕНМЕЛЛИ ПЛАН

«Крайовăй çар» командованийĕ тата вăрттăн «правительство», вăрттăн ĕçлекен организацисем туса, хăйсен кадрĕсемпе штабĕсене, хĕçпăшалĕсемпе боеприпасĕсене сыхласа хăварса, ССР Союзне хирĕç Германипе пĕрле пулса вăрçма хатĕрленмелли плансем тунă.

1945 çулхи мартăн 22-мĕшĕнче «Крайовăй çарăн» командующийĕ **Окулицкий** «Крайовăй çарăн» Хĕвеланăçĕнчи обшарин комендантĕ полковник «**Славбон**» патне янă директивинче, **Окулицкие** арестленĕ чухне туртса илнĕскерĕнче, çапла каланă:

«ССР Союзĕ Германие çĕнтерес пулсан, çак çĕнтерӳ ĕнтĕ Англин Европăри интересĕсене çĕç мар хăратса тăрĕ, вăл тата пĕтĕм Европăна та хăратса тăрĕ...

Вара акăлчансен, Европăри хăйсен интересĕсене шута илсе, Европăри вăйсене ССР Союзне хирĕç мобилизацилеме тытăнмалла пулать. Паллах, Совет Союзне хирĕç тунă Европăри çак блокра эпир малти ретре пулăпăр, кунсăр пуçне тата çав блок Германисĕр пулма та пултараймасть, Германие кунта акăлчансем контроллесе пырĕç».

(ĕç листисем—35-36, 33-мĕш том)

Çак директивăрах тата «акăлчансем Совет Союзне хирĕç организациленĕ блока» каяракпа поляксен вăрттăн ĕçлекен организацийĕсене те кĕртесси çинчен каланă. «Унччен,—тенĕ директивăра, — вĕсем укçа-тенкĕ тĕлĕшĕнчен паракан пулăшупа пирĕн гуллин усă курмалла»

(ĕç листи—36; 33-мĕш том)

Çак директивăна вăл хăй «Крайовăй çарăн» командующийĕ пулнă май панине йышăнса, **Окулицкий** çапла каласа панă: вăрçă хыççăн ССР Союзне хирĕç Польшăпа Германи блокне тăвас шухăш манăн Варшаври восстани вăхăтĕнчех пуçланчĕ, тенĕ.

«...1944 çулхи сентябрь уйăхĕн вĕçĕнче «Крайовăй çарăн» командующийĕ «**Бур**»-**Комаровский** нимĕçсене парăнасси çинчен Германин Варшаври çарĕсен командующийĕпе «СС»-ăн обергруппенфюрерĕпе фон Ден-Бахпа калаçнă.

«Крайовăй çарăн» главнăй штабĕн представителĕ пулса калаçма «Бур»-Комаровский штабăн 22-мĕш (разведка тăвакан) отделĕн начальникĕн заместительне **Богуславский** полковника уйăрса лартнă.

Нимĕçсем каларса тăратнă парăнмалли условисем çинчен «**Бур»-Комаровские** каласа панă май **Богуславский** ман умрах çапла каларĕ: фон Ден-Бах поляксене нимĕçсемпе вăрçма пăрахма сĕнет, мĕншĕн тесен Польшăпа Германин пĕтĕмĕшле тăшманĕ Совет Союзĕ пулса тăрать, терĕ.

Парăннă кун эпĕ «**Бур»-Комаровскипе** тĕл пултăм та ăна: фон Ден-Бах, тет, тĕрĕс те калать пулĕ, терĕм, вара «**Бур»-Комаровский** манпа килĕшрĕ». (**Окулицкий** каласа панинчен, ĕç листисем — 94, 95; 1-мĕш том).

Окулицкий Совет государствине хирĕç Польшăпа Германин блокне тума шутланине çавăн пекех тата «АК»-ăн Станислав округĕнчи комендантĕ **Б. М. Герман** та, урăх ĕçшĕн арестленĕскер, çирĕплетсе панă. Вăл çапла каланă:

«1944 çулхи декабрь уйăхĕпе 1945 çулхи февраль уйăхĕ хушшинче эпĕ юлашки хут **Янсонпа** курнăçнă чухне вăл мана: эпĕ «АК» главнокомандующийĕнчен пĕлтерӳ илтĕм, терĕ. «АК» главнокомандующийĕ (эпĕ унăн хушаматне те, урăхла ятне те пĕлместĕп) **Янсона** çапла каланă: ССР Союзне Германи те, Польша пекех, хăйĕн тăшманĕ тесе шутлать. ССР Союзне хирĕç пыракан вăрçăра Германи çиеле тухма тăрăшать, Польша та Совет Союзĕн тесе шутламан çĕрĕсене каялла илме ĕмĕтленет.

Польшăпа Германи вĕсен пĕрлехи интерессем пур пирки, ССР Союзне хирĕç пулас вăрçăра пĕр-пĕрипе союзлă пулма пултараççĕ».

(ĕç листисем—69-70; 20-мĕш том).

«АК» командованийĕ тата вăрттăн «правительство» хăйĕн директивисенче тата листовкисенче Совет Союзĕпе Хĕрлĕ Çар çинчен тĕрлĕрен элексем сарнине айăпланакан **Окулицкий** çирĕплетсе панă. Хĕрлĕ Çарăн тылĕнче Совет Союзне хирĕç тăшманла пропаганда туни çинчен **Янковский, Пайдак, Чарновский, Михаловский, Звежинский, Бень** тата **Ясюкович** каласа панă.

Айăпланакан **Ясюкович**, çавна йышăнса, çапла каланă:

«Англи правительствине улталас тесе, çапла вара ăна поляксен Лон-ционри «правительствине» активлăнрах пулăшмалла тăвас тесе, эпир Лондона яланхи пекех элеклĕ пĕлтерӳсем янă. Эпир çапла шутланă: Польша ыйтăвне татса парас ĕçе пĕтĕм тĕнчери общественность хутшăнтăр тесе хамăр тăрăшмасан, ăна татса парас ыйту вăраха кайма пултарать. Пире хускатакан мĕнле те пулин вăй кирлĕ пулнă. Çавăн пек вăй вырăнне эпир хам çӳлерех кăтартса панă пĕлтерӳсене шутланă».

(ĕç листисем—85, 86; 4-мĕш том).

Польшăри вăрттăн ĕçлекен организацин «Варшавски глос народовы» ятлă хаçачĕн 1945 çулхи февралĕн 21-мĕшĕнче тухнă 3/131/-мĕш номерĕнче çапла çырнă:

«(Крымри) конференцин результачĕсем, вĕсене Польша интересĕсем енчен пăхсан, чăннипех ĕнтĕ кăмăла пăтратма пултараççĕ. Пĕтĕмĕшле лару-тăру халĕ çакăн пек: пĕтĕм Польша Советсен аллинче, мĕнле те пулин уступка пуласси тата большевиксене Речь Посполитая территорийĕнчен хăваласа кăларассине кăтартакан паллăсем çĕр çинче те, пĕлĕтре те курăнмаççĕ».

Юлашкинчен, союзлă виçĕ правительствăн руководителĕсем Польшăн хĕвелтухăçĕнчи чикки «Керзон» линийĕ тăрăх пымалла (хăшпĕр районта вăл «Керзон» линийĕнчен 5—8 километр хĕвелтухăçнелле пăрăнмалла) тесе йышăнчĕç.

Çапла ĕнтĕ, ултав та пĕтрĕ. Польша та пĕтсе ларчĕ! Союзниксем хăйсем панă сăмахĕ ăçта-ха? Англо-саксем тата вырăссем хушшинче хирĕçӳсем пуçланса каяççĕ тени ăçта?

Эпир паянхи лару-тăру çинчен каларăмăр, халĕ ĕнтĕ малашне мĕн пуласси пăхса тухăпăр.

Англо-саксем пире темиçе хутчен те улталарĕç ĕнтĕ.

Эпир тахçанах пĕлетпĕр: вĕсем Россия çине мĕнле пăхни вăл — вăйă, эпир ăна сывламасăр сăнаса тăратпăр.

Кашни конференци — çĕнĕ ултав. Черчиллĕн кашни сăмахĕ—çĕнĕ те пысăкрах ултав. Крымри конференци вара пур ултавсенчен чи пысăкки пулса тăрать. Хăçан чарăнĕ-ши çак çав тери тарăхтаракан вăйă? Хăçан союзниксем Российăна карланкăран ярса тытĕç-ши?»

(ĕç листисем—81-98; 33-мĕш том).

«Рада единости народовой» ятлă вăрттăн ĕçлекен организацин вице-президенчĕ, вăлах национал-демократсен «Стронництво народове» партийĕн председателĕ **А. К. Звежинский** çакна çирĕплетсе каланă: çӳлте асăннă хаçата вăрттăн кăларнă, хаçат руководителĕсен шутĕнче эпĕ те пулнă, тенĕ. Хаçатăн кăçалхи февралĕн 21-мĕшĕнчи номерне илсен, вăл хаçата Звежинскирен унăн пытанса пурăнакан хватерĕнче тытса илнĕ. Вăл хаçат **Звежинскин**.

(ĕç листисем—311, 312; 7-мĕш том).

АЙĂПЛАНИН ФОРМУЛИ

Следстви çакна палăртнă тесе шутлать:

1) Çак ĕçпе айăпланакан **Л. Б. Окулицкий, Я. С. Янковский, А. В. Бень** тата **С. И. Ясюкович** Украинăпа Белоруссин хĕвеланăç облаçĕсенче, çавăн пекех тата Литвапа Польшăна ирĕке кăларнă хыççăн çав территори çинче, Хĕрлĕ Çар тылĕнче поляксен сăтăрла ĕçсем тăвакан вăрттăн ĕçлекен организацийĕсен организаторĕсемпе руководителĕсем пулнă;

2) айăпланакан **Окулицкий, Янковскипе Бень** тата **Ясюкович** пулăшнипе, поляксен эмиграцири «правительстви» хушнипе, совет çар командованине «Крайовăй çара» салатса яни çинчен суйса пĕлтернĕ. Чăннипе илсен, унăн штабĕсене, офицерĕсен кадрĕсене çаплипех хăварнă, çав никĕс çинче вара «НЕ»—«Неподлеглость» («Никама пăхăнманлăх») текен вăрттăн ĕçлекен çарпа политикăллă организаци туса хунă. Вăл организацин Хĕрлĕ Çар тылĕнче сăтăрла ĕçсем тумалла пулнă тата Германипе пĕрлешсе СССР-а хирĕç вăрçма хатĕрленмелле пулнă;

3) хăйсем тунă вăрттăн ĕçлекен организацисен сăтăрла ĕçĕсене ертсе пынă, вăл ĕçе Хĕрлĕ Çар боецĕсемпе офицерĕсене вĕлерес, Хĕрлĕ Çарăн çулйĕрĕсем çинче диверсисем тăвас енĕпе ертсе пынă. Çапла вара, Хĕрлĕ Çар тылĕнче террорла ĕçсем тата диверсисем тунăшăн моральпе политикăллă ответлăх вĕсем çине ӳкет;

4) Совет çар командованийĕ радио саракан тата радио йышăнакан станцисене, хĕçпăшалпа боеприпассене обязательнăй йĕркепе пама хушса приказ кăларнине пăхмасăрах, çав хатĕрсене пытарнă, Хĕрлĕ Çара хирĕç сăтăрла ĕçсем тăвас тĕлĕшпе усă курнă;

5) айăпланакан **Окулицкий** Хĕрлĕ Çар тылĕнче разведкăпа шпионла ĕçсем туса тăнă;

6) **А. Ю. Пайдак, К. В. Пужак, А. К. Звежинский, К. С. Багинский, С. Ф. Мерзва, З. Ф. Стыпулковский, Е. С. Чарновский, И. А. Хацинский, Ф. А. Урбанский, С. Ф. Михаловский, К. С. Кобылянский** тата **И. Г. Стемлер-Домбский** Хĕрлĕ Çарăн тылĕнче, Польша территорийĕнче поляксен вăрттăн ĕçлекен организацийĕн сăтăрла ĕçĕсене хутшăннă, совет çар командованийĕ радио саракан тата радио йышăнакан станцисене, хĕçпăшалпа боеприпассене пама хушнине çав организацин руководителĕсем пурнăçа кĕртменнине пĕлсе тăнă тата вăл япаласемпе преступникла ĕçсенче усă курнă.

Окулицкий, Янковский, Ясюкович, Бень, Пайдак, Звежинский, Чарновский, Кобылянский, Мерзва, Урбанский, Михаловский тата **Стемлер-Домбский** хăйсен айăпне пĕтĕмĕшпех йышăнчĕç тата вĕсем айăплине ĕçри документсем, япаласем тата свидетельсем каласа панисем кăтартса параççĕ.

Пужак, Хацинский, Багинский хăйсен айăпĕсен пĕр пайне кăна йышăнчĕç: **Пужак** тата **Хацинский**—вăрттăн ĕçлекен «правительствăн» пытанса ĕçлекен радиостанцийĕ пуррине пĕлсе тăнăшăн тата вăл радиостанципе Лондонри эмиграцири «правительствăпа» çыхăнса тăрас ĕçре усă курнăшăн айăплине; **Багинский** — вăрттăн ĕçлекен «НЕ» организацине хутшăнасси çинчен **Окулицкипе** тата **Янковскипе** калаçнăшăн, радиопередатчиксемпе вăрттăн ĕçлекен «министрсен совечĕн» аллинче пулнă хĕçпăшала парасси çинчен совет командованийĕ кăларнă приказа пурнăçламаннишĕн айăплине йышăнчĕç.

Айăпланакан **Стыпулковский** хăйĕн айăпне йышăнмарĕ.

Анчах та ĕçри документсем, япаласем, свидетельсем тата ытти айăпланакансем кăтартса панисем вĕсем пурте айăпли çинчен каласа параççĕ.

Çӳлте кăтартса панă тăрăх, çаксем айăпланаççĕ:

1. **Леопольд Блажевич Окулицкий**, 1898 çулта Краков воеводствинче, Окулице ялĕнче çуралнă, поляк гражданинĕ, Польша çарĕн бригада генералĕ, 1925 çулта Польшăн генеральнăй штабĕн академийĕнчен вĕренсе тухнă, 1943 çулта поляксен Лондонри «правительстви» ăна «Крайовăй çарăн» комендантĕн оперативнăй енпе ĕçлекен заместителĕ туса хунă. Варшаври выступление нимĕçсем пусарнă хыççăн тата «**Бур»-Комаровский** нимĕçсене тыткăна парăннă хыççăн Польшăри «Крайовăй çарăн» командующийĕ пулнă, арестличчен пытанса пурăннă. Вăл, поляксен Хĕрлĕ Çар тылĕнче вăрттăн ĕçлесе сăтăрла ĕçсем туса тăнă организацийĕн руководителĕ пулса, айăпланин формулин 1—5-мĕш пункчĕсенче кăтартса панă преступникла ĕçсем тунăшăн, тепĕр тĕслĕ каласан—РСФСР Уголовнăй Кодексĕн 58—6, 58—8, 58—9, 58—11 статьисенче кăтартса панă преступленисемшĕн айăпланать.

2. **Ян-Станислав Иосифович Янковский**, 1882 çулта, Высоко-Мазовецки уездра çуралнă, поляк, Польша гражданинĕ, Краков университечĕн ялхуçалăх факультетĕнчен вĕренсе тухнă, инженер-агроном, 1943 çулхи апрель уйăхĕнчен пуçласа поляксен Лондонри «правительствин» премьер-министрĕн Польшăра пурăнакан заместителĕ, поляксен вăрттăн ĕçлекен «правительствин» руководителĕ. Арестлес умĕн Польшăра пытанса пурăннă.

3. **Адам Валентьевич Бень**, Сандомир уездĕнчи Ассалья ялĕнче 1899 çулта çуралнă, поляк, Польша гражданинĕ, аслă шкултан вĕренсе тухнă, юрист, «Стронництво людове» ятлă хресчен партийĕн президиумĕн членĕ. 1944 çулхи январь уйăхĕнчен пуçласа арестличчен вăрттăн ĕçлекен «министрсен совечĕн» председателĕ пулнă, арестличчен Польшăра пытанса пурăннă.

4. **Станислав Игнатьевич Ясюкович**, 1882 çулта Ленинград хулинче çуралнă, поляк, Польша гражданинĕ, Мюнхенри университетран вĕренсе тухнă, политэкономи докторĕ, национал-демократсен «Стронництво народове» партийĕн президиумĕн членĕ. 1943 çултанпа поляксен вăрттăн ĕçлекен «правительствин» министрĕ пулса ĕçленĕ, арестличчен Польшăра пытанса пурăннă.—Çак çынсем, Хĕрлĕ Çарăн тылĕнче сăтăрла ĕçсем тăвакан вăрттăн ĕçлекен организацин руководителĕсем пулса тăрса, айăпланин формулин 1-мĕшпе 4-мĕш пункчĕсенче кăтартса панă преступникла ĕçсем тунăшăн, тепĕр тĕслĕ каласан—РСФСР Уголовнăй Кодексĕн 58—8, 58—9, 58—11 статьисенче кăтартса панă преступленисемшĕн айăпланаççĕ.

5. **Антон Юзефович Пайдак**, Краков воеводствинчи Бийскупице ялĕнче 1894 çулта çуралнă, поляк, Польша гражданинĕ, аслă шкултан вĕренсе тухнă,

Юлашки 2-мĕш страницăра.

Польшăра, Литвара тата Белоруссипе Украинăн Хĕвеланăç районĕсенче Хĕрлĕ Çар тылĕнче поляксен вăрттăн ĕçленĕ организацийĕн организаторĕсемпе руководителĕсене тата участникĕсене суд туни

Айăпласа çырнин вĕçĕ

юрист, ППС-ăн Краковри округ комитечĕн членĕ, 1943 çултанпа поляксен вăрттăн ĕçлекен «правительствин» министрĕ, арестличчен Польшăра пытанса пурăннă.

6. Казимир Войцехович Пужак, Тарнополь хулинче 1883 çулта çуралнă, аслă шкултан вĕренсе тухнă, Лодзь университечĕнчи юридически факультета пĕтернĕ. 1921 çултанпа ППС-ăн генеральнăй секретарĕ пулса ĕçленĕ. 1944 çулхи январьтен пуçласа «Рада едности народовой» текен вăрттăн ĕçлекен парламентăн председателĕ пулнă.

7. Александр Казимирович Звежинский, Лодзь воеводствинчи Тушин местечкинче 1880 çулта çуралнă, поляк, Польша гражданинĕ, аслă шкултан вĕренсе тухнă, юрист, хăйĕн профессийĕпе — журналист, национал-демократсен «Стронництво народове» партийĕн председателĕ тата «Рада едности народовой» вице-президенчĕ.

8. Казимир Станиславович Багинский, Варшава хулинче 1890 çулта çуралнă, поляк, Польша гражданинĕ, аслă шкултан вĕренсе тухнă, журналист, «Стронництво людове» ятлă хресчен партийĕн президиумĕн председателĕн заместителĕ тата «Рада едности народовой» текен вăрттăн ĕçлекен парламентăн вице-президенчĕ.

9. Станислав Францевич Мерзва, Краков воеводствинчи Бискупице ялĕнче 1905 çулта çуралнă, поляк, Польша гражданинĕ, аслă шкултан вĕренсе тухнă, юрист, «Стронництво людове» ятлă хресчен партийĕн центральнăй комитечĕн членĕ тата çав партин Краковри организацийĕн секретарĕ.

10. Збигнев Францевич Стыпулковский, Варшава хулинче 1904 çулта çуралнă, поляк, Польша гражданинĕ, «Стронництво народове» партийĕн президиумĕн членĕ.

11. Евгений Станиславович Чарновский, Лодзь хулинче 1904 çулта çуралнă, поляк, Польша гражданинĕ, аслă шкултан вĕренсе тухнă, экономист, демократиллĕ организацисен «Союз демократов» ятлă пĕрлешĕвĕн правленин председателĕ тата «Рада едности народовой» ятлă вăрттăн ĕçлекен парламентăн членĕ.

12. Иосиф Антонович Хацинский, Варшава хулинче 1889 çулта çуралнă, поляк, Польша гражданинĕ, аслă шкултан вĕренсе тухнă, юрист, 1937 çултанпа «Ĕç партийĕн» («Стронництво праци») председателĕ.

13. Франц Андреевич Урбанский, Варшава воеводствинчи Бутновски уездра 1891 çулта çуралнă, поляк, Польша гражданинĕ, «Ĕç партийĕн» ответлă секретарĕ тата «Рада едности народовойăн» тĕп комиссийĕн секретарĕ.

14. Станислав Францевич Михаловский, Познань воеводствинчи Курник местечкинче 1903 çулта çуралнă, поляк, Польша гражданинĕ, аслă шкултан вĕренсе тухнă, юрист, демократиллĕ организацисен «Союз демократов» ятлă пĕрлешĕвĕн председателĕн заместителĕ.

15. Казимир Самуилович Кобылянский, Варшава хулинче 1892 çулта çуралнă, поляк, Польша гражданинĕ, национал-демократсен «Стронництво народове» ятлă партийĕн членĕ.

16. Иосиф Генрихович Стемлер-Домбский, Львов воеводствинчи Далин хулинче 1888 çулта çуралнă, поляк, Польша гражданинĕ, аслă шкултан вĕренсе тухнă, поляксен вăрттăн ĕçлекен «правительствин» информаци департаменчĕн директорĕн заместителĕ тата çав департаментăн кĕнеке издательствин отделенийĕн руководителĕ.—Вĕсем Хĕрлĕ Çар тылĕнче сăтăрла ĕçсем тунă поляксен вăрттăн ĕçленĕ организацийĕн участникĕсем пулнăшăн, айăплавин формулин 6-мĕш пунктĕнче кăтартса панă преступникла ĕçсем тунăшăн, тепĕр тĕслĕ каласан—РСФСР Уголовнăй Кодексĕн 17, 58—8, 58—9, 58—11 статьисенче кăтартса панă преступленисемшĕн айăпланаççĕ.

Çӳлте каласа панă тăрăх, 1944 çулхи июлĕн 26-мĕшĕнче Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Правительстви Польшăн Ирĕклĕх Комитечĕ «Польша территорине совет çарĕсем кĕнĕ хыççăн Совет Главнокомандующийĕпе Польша администрацийĕ епле хутшăнса тăмалли çинчен» калакан Килĕшĕвĕн 7-мĕш статьи тăрăх, каярахпа Польша республикин Вăхăтлăх Правительстви çирĕплетнĕскер тăрăх, çӳлте асăннă айăпланакансене пурне те совет çар влаçĕсен законĕсемпе суд тума тивĕçлĕ пулнипе, ССР Союзĕн Верховнăй Сучĕн Çар коллегийĕн сучĕ умне тăратмалла.

1945 çулхи июнĕн 14-мĕшĕнче Мускав хулинче çырса хатĕрленĕ.

Хĕрлĕ Çарăн Главнăй Прокурорĕ
Юстици генерал-майорĕ
Н. АФАНАСЬЕВ.

ПРИГОВОР

Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕ ячĕпе ССР Союзĕн Верховнăй Сучĕн Çар Коллегийĕ:

Унăн председателĕ—ССР Союзĕн Верховнăй Сучĕн Çар Коллегийĕн председателĕ юстици генерал-полковникĕ **В. В. Ульрих;**

ССР Союзĕн Верховнăй Сучĕн Çар Коллегийĕн членĕсем—юстици генерал-майорĕ **Л. Д. Дмитриев,** юстици полковникĕ **И. В. Детистов;**

Секретарĕсем — юстици полковникĕ **А. А. Батнер** тата юстици подполковникĕ **А. Н. Кудрявцев;**

государство енчен айăплакансен представителĕсем: Хĕрлĕ Çарăн главнăй прокурорĕ—юстици генерал-майорĕ **Н. А. Афанасьев** тата юстицин 2-мĕш класри государство советникĕ **Р. А. Руденко** хутшăннипе тата Мускаври адвокатсен коллегийĕн представителĕсем—**И. Д. Брауде, В. И. Михальский, Н. Н. Миловидов, С. К. Казначеев, В. П. Маркевич, М. А. Оцеп** тата **С. Ф. Плевак** хутшăннипе—

Мускав хулинче, 1945 çулхи июнĕн 18—21-мĕшĕсенче, судăн уçă ларăвĕсенче çаксене айăплас ĕçе пăхса тухрĕ:

1) Леопольд Блажевич **Окулицкий,** 1898 çулта Краков воеводствинче çуралнă, поляк, Польша гражданинĕ, Польша çарĕн бригаднăй генералĕ, Польшăн генеральнăй штабĕн çар академийĕнчен вĕренсе тухнă—вăл РСФСР уголовнăй кодексĕн 58—6, 58—8, 58—9 тата 58—11 статьисенче палăртнă преступленисемшĕн айăпланать;

2) Ян-Станислав Иосифович **Янковский,** 1882 çулта Высоко-Мазовецк уездĕнче çуралнă, поляк, Польша гражданинĕ, аслă шкултан вĕренсе тухнă, поляксен Лондонри правительствин премьер-министрĕн заместителĕ, вăл Польшăра пурăнса поляксен вăрттăн «правительствин» руководителĕ пулнă;

3) Адам Валентьевич **Бень,** 1899 çулта Сандомир уездĕнче çуралнă, поляк, Польша гражданинĕ, аслă шкултан вĕренсе тухнă, «Стронництво людове» президиумĕн членĕ, поляксен вăрттăн «правительствин» министрĕ;

4) Станислав Игнатьевич **Ясюкович,** 1882 çулта Ленинград хулинче çуралнă, поляк, Польша гражданинĕ, аслă шкултан вĕренсе тухнă, «Стронництво народове» президиумĕн членĕ, поляксен вăрттăн «правительствин» министрĕ—

çаксем виççĕшĕ те РСФСР уголовнăй кодексĕн 58—8, 58—9 тата 58—11 статьисенче палăртнă преступленисемшĕн айăпланаççĕ;

5) Казимир Войцехович **Пужак,** 1882 çулта Тарнополь хулинче çуралнă, поляк, Польша гражданинĕ, аслă шкултан вĕренсе тухнă, ППС-ăн генеральнăй секретарĕ, вăрттăн ĕçлекен «Рада едности народовой» председателĕ;

6) Александр Казимирович **Звежинский,** 1880 çулта Лодзь воеводствинче çуралнă, поляк, Польша гражданинĕ, аслă шкултан вĕренсе тухнă, «Стронництво народове» председателĕ тата «Рада едности народовой» президенчĕ;

7) Казимир Станиславович **Багинский,** 1890 çулта Варшава хулинче çуралнă, поляк, Польша гражданинĕ, аслă шкултан вĕренсе тухнă, «Стронництво людове» президиумĕн председателĕн заместителĕ, «Рада едности народовой» вице-президенчĕ;

8) Станислав Францевич **Мерзва,** 1905 çулта Краков воеводствинче çуралнă, поляк, Польша гражданинĕ, аслă шкултан вĕренсе тухнă, «Стронництво людовĕн» центральнăй комитечĕн членĕ тата Краковри организацийĕн секретарĕ;

9) Збигнев Францевич **Стыпулковский,** 1904 çулта Варшава хулинче çуралнă, поляк, Польша гражданинĕ, «Стронництво народове» президиумĕн членĕ;

10) Евгений Станиславович **Чарновский,** 1904 çулта Лодзь хулинче çуралнă, поляк, Польша гражданинĕ, аслă шкултан вĕренсе тухнă, демократиллĕ организацисен «Союз демократов» ятлă пĕрлешĕвĕн правленийĕн председателĕ, «Рада едности народовой» членĕ;

11) Иосиф Антонович **Хацинский,** 1889 çулта Варшава хулинче çуралнă, поляк, Польша гражданинĕ, аслă шкултан вĕренсе тухнă, «Стронництво праци» председателĕ;

12) Франц Андреевич **Урбанский,** 1891 çулта Варшава воеводствинче çуралнă, поляк, Польша гражданинĕ, «Стронництво праци» ответлă секретарĕ, «Рада едности народовойăн» главнăй комиссийĕн секретарĕ;

13) Станислав Францевич **Михаловский,** 1903 çулта Познань воеводствинче çуралнă, поляк, Польша гражданинĕ, аслă шкултан вĕренсе тухнă, демократиллĕ организацисен «Союз демократов» ятлă пĕрлешĕвĕн правленийĕн председателĕн заместителĕ;

14) Казимир Самуилович **Кобылянский,** 1892 çулта Варшава хулинче çуралнă, поляк, Польша гражданинĕ, аслă шкултан вĕренсе тухнă, «Стронництво народове» членĕ тата

15) Иосиф Генрихович **Стемлер-Домбский,** 1888 çулта Львов облаçĕнче çуралнă, поляк, Польша гражданинĕ, аслă шкултан вĕренсе тухнă, поляксен вăрттăн «правительствинчи» информаци департаменчĕн директорĕн заместителĕ тата çав департаментри кĕнеке кăларас тĕлĕшпе ĕçлекен пайăн руководителĕ—

вĕсем вунпĕрĕшĕ те РСФСР уголовнăй кодексĕн 17, 58—8, 58—9 тата 58—11 статьисенче палăртнă преступленисемшĕн айăпланаççĕ.

Малтан тата судра тĕпчесе çакна палăртнă:

Поляксен Лондонри эмиграцири «правительстви» Польшăра, Литва ССР-ĕнче тата Украинăпа Белоруссин ССР-ĕсен хĕвеланăç облаçĕсенче, фашистла нимĕç захватчикĕсем вăхăтлăха оккупациленĕскерсенче, «Крайовăй çар» («АК») ятлă вăрттăн ĕçлекен çар организацине туса хунă. 1944 çулхи сентябрь уйăхĕччен ăна Польша çарĕн генералĕ «Бур»-Комаровский ертсе пынă, 1944 çулхи октябрь уйăхĕнчен пуçласа, «Бур»-Комаровский нимĕçсене тыткăна парăннă хыççăн, унăн заместителĕ бригаднăй генерал Леопольд Окулицкий ертсе пынă.

«Крайовăй çарăн» ĕçне çавăн пекех тата поляксен вăрттăн ĕçленĕ «министрсен совечĕн» председателĕ Ян-Станислав Янковский тата унăн çывăх помощникĕсем Станислав Ясюкович тата Адам Бень ертсе пынă.

Совет çарĕсем Украинăпа Белоруссин хĕвеланăçĕнчи облаçĕсене, çавăн пекех тата Литвапа Польшăн территорийĕсене ирĕке кăларнă хыççăн, айăпланакансем Окулицкий, Янковский, Бень тата Ясюкович поляксен вăрттăн ĕçлекен организацийĕсен организаторĕсем тата руководителĕсем пулса тăнă. Çав организацисем Совет Союзĕн çапăçури çарĕн тылĕнче тăшманла ĕçсем активлăн туса пынă.

«Крайовăй çарăн» командующийĕ бригаднăй генерал Окулицкий поляксен Лондонри эмиграцири «правительствинчен» шифрланă текстпе радиограмма илнĕ. Çав радиограммăсенче «АК»-ăн хĕçпăшаллă вăйĕсене сыхласа хăварма хушнă. 1944 çулхи декабрĕн 8-мĕшĕнче Окулицкие панă радиограммăра эмиграцири «правительство» йышăннă постановленин пĕтĕм текстне пĕлтернĕ. Çав постановлени тăрăх «Крайовăй çара», унăн çыннисене тата пурлăхĕсене вăрттăнлатма хушнă.

Генерал Окулицкий, çав кăтартусене пурнăçа кĕртсе, Совет Союзĕн çапăçури çарĕсен командованине улталас тесе, 1944 çулхи декабрь уйăхĕнче «Крайовăй çара» салатса ярасси çинчен суя приказ кăларнă. Çав приказрах вăл «АК»-ăн тĕп кадрĕсене вăрттăнлатма, хĕçпăшалсемпе боеприпассене тата ĕçлекен радиостанцисене тĕплĕн пытарма хушнă.

Çав «ултавпа суя маневр» туса, Окулицкий, Янковский, Бень тата Ясюкович Польшăна нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă Хĕрлĕ Çарăн тылĕнче Совет Союзне хирĕç активлăн кĕрешес ĕçре çав вăрттăн ĕçлекен «Крайовăй çарăн» хĕçпăшаллă отрячĕсемпе тата организацийĕсемпе усă курнă.

1945 çулхи февраль уйăхĕнче Польшăри вăрттăн ĕçлекен «министрсен совечĕн» ларăвĕнче айăпланакан Окулицкий «Крайовăй çарăн» тĕп кадрĕсенчен хăй тунă организацие ертсе пыма вăрттăн ĕçлекен «Неподлеглость» («Никама пăхăнманлăх», кĕскен каласан—«НЕ») текен «политикăлла центр» тума сĕннĕ. Унта «Стронництво людове», «Стронництво народове», ППС тата «Демократсен союзĕн» представителĕсем кĕмелле пулнă.

«Министрсен совечĕ» (унта айăпланакан Янковский, Бень тата Ясюкович кĕнĕ), Окулицкий сĕнĕвне ырласа, çак ыйту тăрăх çӳлте асăннă партисен представителĕсемпе калаçу пуçласа яма Янковские хушнă.

«Неподлеглость» организацийĕн тĕп задачи Совет Союзне хирĕç восстани хатĕрлеме кадрсем пĕтĕçтерессе, хĕçпăшал тата ытти хатĕрсем упраса хăварасси, совет çар çыннисемпе «АК» организацине хирĕç пыракансене вĕлерме боевой отрядсемпе террор ушкăнĕсем тăвасси, Хĕрлĕ Çарăн тылĕнче диверсисем тăвасси тата шпионла сведенисем пухасси, çавăн пекех тата Совет Союзне хирĕç тăшманла пропаганда туса пырасси пулнă.

«Крайовăй çарăн» террорла тата диверсилле ушкăнĕсем совет çарĕсен тылĕнче, Литвапа Польшăра тата Украинăпа Белоруссин хĕвеланăç облаçĕсенче 1944 çул хушшинче тата 1945 çул пуçламăшĕнче Хĕрлĕ Çарăн боецĕсемпе офицерĕсене вĕлерсе пынă тата Хĕрлĕ Çарăн çулйĕрĕсем çинче диверсиллĕ ĕçсем туса тăнă.

«АК» отрячĕсем советсен çар тата граждан учрежденийĕсене хĕçпăшалпа тапăннă.

Туллимар даннăйсем тăрăх, 1944 çулхи июлĕн 28-мĕшĕнчен декабрĕн 31-мĕшне ситиччен кăна «АК» отрячĕсем Хĕрлĕ Çарăн боецĕсемпе офицерĕсене 277 çын вĕлернĕ, 94 çын амантнă.

Терроркла тата диверсиллĕ ĕçсем тунипе пĕрлех, поляксен Лондонри эмиграцири «правительстви» хушнипе тата Окулицкий ертсе пынипе, «АК»-ăн вырăнти организацийĕсем совет çарĕсен тылĕнче çав çарсем çинчен сведенисем пухса радио тăрăх шифрпа парса тăнă.

Поляксен вăрттăн ĕçлекен «правительствин» тата «Крайовăй çар» организацийĕсен совет çар командованийĕнчен пытанса ĕçлекен радиостанцисем пулнă. Вăл станцисем урлă поляксен Лондонри «правительствине» тата «АК»-ăн главнăй командованине вĕсен приказĕсемпе директивисене пурнăçлани çинчен пĕлтерсе тăнă, совет çарĕсем çинчен шпионла сведенисем парса тăнă. Польшăн нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă территорийĕнче совет çар çыннисем çинчен провокацилле хыпарсем панă, ирĕке кăларнă Польшăри политикăллă лару-тăру çинчен юриех суя тата элекле пĕлтерсе тăнă.

Польшăра вăрттăн ĕçлекен организаци руководителĕсем — Окулицкий, Янковский, Бень тата Ясюкович, провокацилле суя хыпарсем сарса, совет командованийĕн ĕçĕсене сăтăр тăвасшăн пулнă.

Поляксен эмиграцири «правительствине» суя тата элекле хыпарсем пĕлтерсе тăрса, вĕсем çав «правительствăна хăйсен пĕлтерĕвĕсемпе усă курса, Совет Союзĕн çарĕсем нимĕç оккупанчĕсен пусмăрĕнчен ирĕке кăларнă Польшăри чăн-чăн лару-тăру çинчен Британи правительствине уйăхла каласа пама май парасшăн пулнă.

Совет Союзне хирĕçле ĕçе туса пынипе, поляксен вăрттăн ĕçлекен «правительствин» тата «Крайовăй çарăн» руководстви Европăра вăрçă пĕтнĕ хыççăн Польшăпа Германин Совет Союзне хирĕçле çар блокне туса хурасшăн пулнă. 1945 çулăн пуçламăшĕнче Окулицкий, Германи Совет Союзне тапăнассине, çакă поляксен эмиграцири «правительствин» кăмăлне каясса шута илсе, хăйĕн «директивисенче» «АК»-ăн вырăнти организацийĕсене Германипе пĕрле Совет Союзне хирĕç вăрçмалла пулать тесе кĕрентнĕ.

Çӳлте асăннисене шута илсе, ССР Союзĕн Верховнăй Сучĕн Çар Коллегийĕ Окулицкий, Янковский, Бень тата Ясюкович айăплине, вĕсем РСФСР Уголовнăй Кодексĕн 58-8, 58-9 тата 58-11 статьисенче кăтартнă преступленисемшĕн айăплине палăртнă тесе шутлать. Окулицкий, кунсăр пуçне, РСФСР Уголовнăй Кодексĕн 58-6 статьи тăрăх айăплă пулнине палăртнă тесе шутлать.

Казимир Пужак, Александр Звежинский, Казимир Багинский, Станислав Мерзва, Збигнев Стыпулковский, Евгений Чарновский, Иосиф Хацинский тата Франц Урбанский айăпланакансем тĕлĕшпе çакă палăрнă: вĕсем пурте совет çар командованийĕн Хĕрлĕ Çар тылĕнче Совет Союзне хирĕç усă куракан хĕçпăшала, боеприпассене тата радиостанцисене памалли çинчен калакан приказĕсене поляксен вăрттăн ĕçлекен организацийĕсен руководителĕсем пурнăçламанни çинчен пĕлсе тăнă çĕртех çакна совет çар командованийĕнчен пытарнă. Çапла вара, РСФСР Уголовнăй Кодексĕн 58-12 статьинче кăтартнă преступление тунă. РСФСР Уголовнăй Кодексĕн 17, 58-8, 58-9 тата 58-11 статьисенче кăтартнă преступленисемшĕн айăплани, материалсем çителĕклĕ мар пирки, тĕрĕс мар тесе шутлас.

Окулицкипе тата поляксен вăрттăн ĕçлекен организацийĕсен руководителĕсемпе пĕрле пулнă Станислав Михаловский, Казимир Кобылянский, Иосиф Стемлер-Домбский РСФСР Уголовнăй Кодексĕн 17, 58-8, 58-9 тата 58-11 статьисенче кăтартнă преступленисемшĕн айăпли çителĕклĕ палăрмарĕ.

Айăпланакансене наказани панă чухне ССР Союзĕн Верховнăй Сучĕн Çар Коллегийĕ, çак ĕçĕн пур енĕсене те шута илнипе пĕрлех, Совет Союзĕ Отечественнăй аслă вăрçăра çĕнтернине шута илет. Мирлĕ строительство тапхăрне кӳçнĕ вăхăтра персе пăрахмалла тăвасси кирлех маррине шута илсе, ССР Союзĕн Верховнăй Сучĕн Çар Коллегийĕ **ÇАПЛА ПРИГОВОР ЙЫШĂНАТЬ:**

1) Леопольд Блажевич **Окулицкие,** Ян-Станислав Иосифович **Янковские,** Адам Валентьевич **Бене,** Станислав Игнатьевич **Ясюковича** РСФСР Уголовнăй Кодексĕн 58-2 статьи тăрăх çакăн чухлĕ вăхăта хупса хумалла тăвас:

Окулицкие вунă çуллăха,
Янковские сакăр çуллăха,
Бене тата **Ясюковича** кашнине пилĕкшер çуллăха;

2) Казимир Войцехович **Пужака,** Казимир Станиславович **Багинские,** Александр Казимирович **Звежинские,** Евгений Станиславович **Чарновские,** Станислав Францевич **Мерзвана,** Збигнев Францевич **Стыпулковские,** Иосиф Антонович **Хацинские** тата Франц Андреевич **Урбанские** РСФСР Уголовнăй Кодексĕн 17—58-8, 58-9 тата 58-11 статьисем тăрăх тӳрре кăларас, РСФСР Уголовнăй Кодексĕн 58-12 статьи тăрăх, **Мерзва, Стыпулковский, Хацинский** тата **Урбанский** пирки Уголовнăй Кодексăн 51-мĕш статьипе усă курса, вĕсене çакăн чухлĕ вăхăта хупса хумалла тăвас:

Пужака çулталăк çурăлăха,
Багинские пĕр çуллăха,
Звежинские сакăр уйăхлăха,
Чарновские ултă уйăхлăха,
Мерзвана, Стыпулковские, Хацинские тата **Урбанские** кашнине тăватшар уйăхлăха хупмалла тăвас. Судпа айăпланă 12 çынна хупса усрамалли вăхăта вĕсене кашнине çак ĕçпе хупнă кунран шутламалла;

3) Станислав Францевич **Михаловские,** Казимир Самуилович **Кобылянские** тата Иосиф Генрихович **Стемлер-Домбские** судпа тӳрре кăларнă тесе шутлас.

Ĕçри япаласене—документсене ĕçрех хăварас, тĕрлĕ аппаратурăна—конфискацилемелле тăвас.

Приговор татăклă, кассаци йĕркипе жалоба пама юрамасть.

Председатель пулса ертсе пыраканĕ — ССР Союзĕн Верховнăй Сучĕн Çар Коллегийĕн Председателĕ юстици генерал-полковникĕ **В. Ульрих.**

Членĕсем — СССР Верховнăй Сучĕн Çар Коллегийĕн членĕсем
юстици генерал-майорĕ Дмитриев,
юстици полковникĕ Детистов.

СОВЕТ ПРАВИТЕЛЬСТВИПЕ ВЕНГРИН ВĂХĂТЛĂХ НАЦИ ПРАВИТЕЛЬСТВИ ВЕНГРИ СОВЕТ СОЮЗĔПЕ ВĂРÇНĂ ВĂХĂТРА ТАТА СОВЕТ ТЕРРИТОРИНЕ ОККУПАЦИЛЕСЕ ТУНĂ СИЕНСЕНЕ САПЛАМА СОВЕТ СОЮЗНЕ ТАВАРСЕМ ТĂРАТАССИ ÇИНЧЕН ТУНĂ КИЛĔШĔВЕ АЛĂ ПУСНИ

Совет Союзĕн Правительствипе Венгрин Вăхăтлăх наци правительстви 1945 çулхи январĕн 20-мĕшĕнче перемири çинчен тунă Килĕшĕвĕн 12-мĕш статьине пурнăçа кĕртесси çинчен калаçнă хыççăн кăçалхи июнĕн 15-мĕшĕнче Будапешт хулинче Килĕшӳ туса алă пуснă. Çав Килĕшӳ Венгри Совет Союзĕпе вăрçнă вăхăтра тата Совет территорине оккупацилесе тăрса тунă сиенсене саплама Совет Союзне таварсем тăратасси çинчен калать.

Перемири çинчен тунă Килĕшĕвĕн 12-мĕш статьи тăрăх, Венгри Совет Союзне 1945 çулхи январĕн 20-мĕшĕнчен пуçласа 1951 çулхи январĕн 20-мĕшне çитиччен мĕн пурĕ, Америка долларĕпе шутласа, 200 миллион долларлăх тавар тăратмалла, сулсеренех пĕртан тăратса тăмалла.

Халь тунă Килĕшӳре мĕнле таварсем тăратмаллине кăтартса панă. Ак çак таварсене тăратмалла: машина оборудованийĕ, суднасем, тырпул, выльăх-чĕрлĕх тата ытти таварсем те. Мĕнле таварсем тăратмаллине пурне те тĕплĕн асăнса кăтартса панă, çавăн пекех тата вĕсене хăш вăхăтра тăратмаллине те кăтартса панă.

Тăратмалли таварсен хакне 1938 çулхи хаксем тăрăх Америка долларĕсемпе шутласа кăтартса панă, анчах та промышленность оборудованине 15 процент хушса, ытти таварсене 10 процент хушса хакланă.

Килĕшӳ тăвас тĕлĕшпе пынă калаçусенче икĕ енĕ те пĕрне-пĕри лайăх ăнланни палăрнă.

Килĕшĕве Совет Правительстви хушнипе Совет Союзĕн Маршалĕ К. Е. Ворошилов, Венгри правительстви хушнипе премьер-министр Миклош господин алă пуснă.

«НОРМАНДИ-НЕМАН» ЭСКАДРИЛЬИ ПАРИЖА ÇИТНĔ

ПАРИЖ, июнĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Парижри радио пĕлтернĕ тăрăх, французсен Совет Союзĕпе Германи фронтĕнче ăнăçлă çапăçнă «Норманди-Неман» эскадрильи июнĕн 20-мĕшĕнче Парижа çитнĕ. Бурже аэродромне анса ларичченех эскадрилья летчикĕсем Париж çинче вĕçсе çаврăннă, унтан Триумфальнăй арка çинче темиçе хут вĕçсе çаврăннă. Париж хулинчи халăх совет истребителĕсене пĕрремĕш хут курнă. Ку истребительсене Совет Союзĕнче вăрçă вăхăтĕнче тунă, вĕсем çинче ларса француз летчикĕсем темиçе хутчен те чаплă çĕнтерӳсем тунă, вăл истребительсене Совет правительстви «Норманди-Неман» эскадрильине парнелесе панă.

НОРВЕГИРЕ ÇĔНĔ ПРАВИТЕЛЬСТВО ТĂВАССИ ÇИНЧЕН

ЛОНДОН, июнĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Норвегин телеграф агентстви пĕлтернине панă. Пĕлтерӳре çапла каланă: Норвегин Верховнăй Сучĕн председателĕ Поль Берг иртнĕ эрнере çĕнĕ правительство тума килĕшнĕ пулнă. Халĕ вăл Норвеги корольне Хокона хăй çĕнĕ правительство тума тăрăшни ăнăçлă пулманни çинчен пĕлтернĕ.

Осло хулинчен илнĕ хыпарсем тăрăх, Берга çĕнĕ правительство тума консерваторсен партийĕ чăрмантарнă.

ЛОНДОН, июнĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, июнĕн 19-мĕшĕнче Норвеги королĕ Хокон çĕнĕ правительство тума Норвегири рабочи партийĕн пуçлăхне Эйнер Герхардсена хушнă.

ЛЕОПОЛЬД КОРОЛЬ ХĂЙНЕ ВЫРĂНТАН ТУХМА ЫЙТНИПЕ КИЛЕШМЕН

НЬЮ-ЙОРК, июнĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Бельги королĕ Леопольд хăйне вырăнтан тухма ыйтнипе килĕшмен. Вăл çапла каланă: ман власть пĕтĕмĕшпех конституцире кăтартнă пек пулать, тенĕ.

ЛАПКА ОКЕАН ÇИНЧИ ВĂРÇĂ

ВАШИНГТОН, июнĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). США çар министерстви пĕлтернĕ тăрăх, июнĕн 20-мĕшĕнче американецсен «Вĕçекен крепость» йышши хăватлăран та хăватлă бомбардировщикĕсем Хонсю утравĕн вăтам пайĕнчи тата Кюсю утравĕн (Япони) çурçĕр пайĕнчи промышленность сооруженийĕсене тапăннă.

НЬЮ-ЙОРК, июнĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, июнĕн 20-мĕшĕнче Японие тапăннă вăхăтра «Вĕçекен крепость» йышши 450 ытла самолет пулнă. Вĕсем Сидзуока тата Теохаси хулисем çине (Хонсю утравĕ) тата Фукуока хули çине (Кюсю утравĕ) вут хыптаракан 3.000 тонна бомба пăрахнă.

Рейтер агентствин обозревателĕ Австри ыйтăвĕ пирки

ЛОНДОН, июнĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин обозревателĕ Ион Кирхе çапла çырать: Англин, Францин тата Америкăн Венăри çар миссийĕсем, Австри столицинчен тухса кайса, хăйсен штабĕсене таврăннă. Вĕсем хыççăн Вена хулине Союзниксен Контроль Комиссийĕ пĕтĕм составĕпех пырĕ тесе шанни пурнăçа кĕмен.

Çав вăхăтрах, çырать обозреватель, Реннер правительствин лару-тăрăвĕ çирĕпленет пулас. Австрин Англипе Америка влаçĕсене пăхăнса тăракан провинцийĕсенчи правительствăсем те Реннер правительствине законлă правительство тесе йышăнаççĕ курăнать. Вырăнсенче те Кăнтăрти Тироль ыйтăвне татса парас тĕлĕшпе пуçарулăх палăрать. Кăнтăрти Тироль хальхи вăхăтра Америкăн çар администрацийĕ аллинче тăрать. Çурçĕр Итали территорине кĕнипе, вăл, пĕтĕм Çурçĕр Итали пекех, çав администраци аллинче тăмалла пулин те, унăн пуласлăхĕ пирки иккĕленни палăрать. Итальянецсем, паллах, Кăнтăрти Тироле хăйсен аллинчех хăварасшăн, анчах австриецсем те ăна хăйсен аллине илесшĕн. Çак ыйтупа иртнĕ вăрçă хыççăнхи пек хирĕçӳ ан тухса кайтăр тесе, икĕ халăх представителĕсем Австрипе Италин пĕрлешӳллĕ патриотла комитетне туса хунă. Вĕсем çапла килĕшӳ туса алă пуснă: Кăнтăрти Тироль Итали аллинче юлсан, унта пурăнакан австриецсен культурăллă автономи пулмалла. Союзниксем Кăнтăрти Тироле Австрие памалла тусан, çав провинцири итальянецсен культурăллă автономи пулмалла. Кăнтăрти Тиролĕн пуласлăхĕ пирки нимĕнле решени те йышăнманнине уйрăмăнах палăртса хăварас пулать. Триест тата ытти территорисем пирки тăракан ыйтусем пекех, çак ыйтăва татса парассине те пĕтĕмĕшле килĕшӳ тăвиччен хăвармалла пулать.

Паллă гитлеровецсем Испание тарни çинчен

ЛОНДОН, июнĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). «Дейли экспресс» хаçатăн Барселона хулинчи корреспонденчĕ çапла çырать: майăн 11-мĕшĕнче Реусе аэродромĕ çине (Барселона хулинчен 80 миля кăнтăр-хĕвеланăçнерехре) нимĕçсен самолечĕ анса ларнă. Çав самолетпа икĕ паллă нацист вĕçсе пынă. Вĕсем самолет çинчен ансан, самолет команди пысăк чыс тунă. Çав нацистсенчен пĕри хăйĕн пит-куçне никама та кăтартмасăр хупласа пынă. Аэродрома Барселонăн çар губернаторĕ пынă, вăл вара савăнтах Мадрида телефон тăрăх каласса илнĕ. Кăшт тăхтасан, Испани самолечĕ вĕçсе пынă, вара нацистсем çав самолет çине ларнă та вĕçсе кайнă, ăçта вĕçсе кайнине пĕлмеççĕ.

Корреспондент çапла ыйтать: хăй питне никама та кăтартмасăр хупласа пынă нацист Гитлер пулман-ши?—тет.

ИТАЛИН ÇĔНĔ ПРАВИТЕЛЬСТВИНЕ ТУМА ФЕРРУЧЧО ПАРРИЕ ХУШНА

РИМ, июнĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Римри радио пĕлтернĕ тăрăх, Итали наместникĕ принц Умберто Италин çĕнĕ правительствине тума Ферруччо Парри профессора хушнă.

РИМ, июнĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Италин çĕнĕ правительствине çаксем кĕреççĕ: премьер-министр, вăлах шалти ĕçсен министрĕ Феруччо Парри («кĕрешӳ партийĕ»), премьер-министр заместителĕ Пьетро Ненни (социалист), премьер-министр заместителĕ—Манлио Брозио (либерал), ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ—Альчиде де Гаспери (христиан демократсен партийĕ), юстици министрĕ—Пальмиро Тольятти (коммунист), реконструкци министрĕ—Меуччо Руини («ĕç демократийĕн» партийĕ) тата ыттисем те. Вĕсен шутĕнче: «ĕç демократийĕ» партийĕнчен, коммунистсенчен, кĕрешӳ партийĕнчен, либералсенчен, социалистсенчен икшер представитель.

Ответлă редактор **В. Я. ЯКОВЛЕВ.**

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместителĕн — 2—89, секретариатăн — 4—26, пропаганда пайĕн — 2—89, парти пурнăç пайĕн 3—99, промышленность пайĕн — 3—97, ялхуçалăх пайĕн — 3—99, рабселькорсен пайĕн — 0—67, издательство [illegible] — 0—23.

НТ 00142 Типография №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2, ф. б. 59 42 п. п. Тираж 16.000